

# НИКАМА ТА МАНМАН, НИМĔН ТЕ МАНĂÇМАН

## Ун чухне тăххăрта пулнă



Сăн ÿкерчĕкре Çурлатринчи Серафима Александровна Пугачевăна куратăр. Вăл Уйкас Турай ялĕнче 1932 çулхи февралĕн 12-мĕшĕнче çуралнă. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçланнă вăхăтра 9 çулти хĕр ача пулнă, Турай шкулĕнче иккĕмĕш класра вĕреннĕ. Вырăнти колхоз ун чухне «Металлист» ятпа тăнă. Ачасем те аслисемпе пĕрле колхоз уй-хирне васканă, вăй çитнĕ ĕçсене тунă.

– Ачасем аслисемпе пĕрле Çĕмĕрле лесничествине вăрман касма каятчĕç. Эпĕ те çав ĕçе лекрĕм, аслисем вутă, йывăç хатĕрлетчĕç, вăй çитнĕ таран эпир те йăтнă, каснă йывăç турачĕ пухнă. Аттин тăванĕ, Ольга Николаева 1916 çулта çуралнăскер, Етĕрне çывăхĕнче Сăр окопне чавма тухса кайнине астăватăп. Питĕ нушаллăн ĕçленĕ çав унта çынсем, – аса илет халĕ вăрçă ачи иртнине.

Серафима Турай шкулĕнче çичĕ класлă пĕлÿ илнĕ. Каярах вăл 1953 çултан тытăнса «Знамя труда» колхозра ĕçлеме тытăннă, уйхир ĕçĕсене хутшăннă, 1987 çулта тивĕçлĕ канăва тухнă, 1990 çулччен пĕрлехи хуçалăхра тăрăшнă, вырăнти хуçалăхпа район экономикине тĕреклетнĕ. Мăшăрĕпе Василий Емельяновичпа виçĕ ача ура çине тăратнă.

Серафима Александровна вăрçă çулĕсенчи тата хыççăнхи йывăр вăхăт пирки хурланса аса илет. Тыл ĕçченне Аслă Çĕнтерĕвĕн юбилейлă медалĕсемпе чысланă.

## Хастар чăваш салтакĕ

Чăваш Енте çуралса ÿснĕ 54 пине яхăн çынна Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн тĕрлĕ орденпа, медальпе чысланă. Вăрçă 100 пин ытла чăваш салтакĕн кун-çулне татнă, кашни иккĕмĕш çын тăван киле таврăнайман.

Сăн ÿкерчĕкри Николай Иванович Иванов кĕçĕн лейтенант та вăрçăра орденсемпе медальсене тивĕçнĕ. Ăна Хĕрлĕ Ялав орденĕпе, Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе тата 7 медальпе чысланă.



Вăл 1919 çулти ноябрĕн 11-мĕшĕнче Ятман ялĕнче çуралнă. Муркаш шкулĕнче вĕреннĕ, анчах та чире пула вуннăмĕш класлă пĕлĕве илсе пĕтереймен. Хыççăн вăл Ворошилов ячĕпе хисепленекен хуçалăхра уйхир бригадин бригадирĕнче тăрăшнă.

Вăхăт çитнипе 1939 çулти ноябрĕн 20-мĕшĕнче Сĕнтĕр çар комиссариачĕ урлă çар ретне тăнă. Курсант 1940 çулти октябрь уйăхĕнчен тытăнса 1941 çулти июльччен Прибалтика çар округĕнче, Хĕвел тухăç фронтĕнче оруди командирĕ пулнă. Пĕлÿпе ăсталăхаТомскри артиллери училищинче ÿстернĕ. Каярах управлени взвочĕн командирĕ Николай Иванов Украина, Белорусси, Калинин фрончĕсенче çапăçнă.

1945 çулти апрелĕн 29-мĕшĕнче Берлина илнĕ чухне йывăр аманнă. Çĕнтерĕве вăл çапăçу хирĕнче кĕтсе илеймен, декабрь уйăхĕччен Познань хулинчи эвакогоспитальте сипленнĕ. Хыççăнах вăл çар ĕçне пикеннĕ. 1946 çулти июлĕн 31-мĕшĕччен 1 дивизион разведка ертÿçинче тăрăшнă. Анчах та çав кунран ăна чире пула саппаса хăтарнă. Вăл вăрçă çулĕсенче тата хыççăн Германире, Польшăра пулнă.

## Тылра

Чăваш АССР-не вăрçă пуçлансан кĕске вăхăтра 20 заводпа цех эвакуацилесе килсе ĕçлеттерме пуçланă. 10 ытла предприяти çĕнĕрен йĕркеленĕ, вăл шутра Сĕнтĕрти пир тĕртекен фабрика та пур. Промышленноçа вăрçă валли хатĕрлесе çитерессине 1942 çул вĕçне йĕркелесе пĕтернĕ. Чăваш Ен вутă хатĕрлессипе Оборона Патшалăх комитечĕн саккасне илнĕ. Хусан чукун çулне, чылай предприятие вутăпа ăнăçлă тивĕçтерсе тăнăшăн республикăна оборона комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавĕпе чысланă.

Вăрçă пуçланнă çулти кĕркунне Чăваш Ен йĕлтĕр, çуна тума пысăк саккас илнĕ. Тепĕр çулхине, 1940 çултипе танлаштарсан, 50 хут ытларах йĕлтĕр туса кăларнă. Чăваш Енти колхозсем вăрçă вăхăтĕнче фронта çăкăрпа тивĕçтерес тесе ака-суха лаптăкĕсене 4 пин га çурă майлă ÿстернĕ, пĕр га пуçне тивекен вăтам тухăç 11,8 ц танлашнă. 1941 – 1944 çулсенче колхозниксем хăйсен саппасĕнчен фронта валли 1 миллион та 210 пин пăт тырă панă.

Çав çулсенче тыл ĕçченĕсем фронта валли 21 пин ытла кĕрĕк, 12 пин мăшăр аялти кĕпе-йĕм çĕленĕ. 25 пин мăшăр çăматă тунă, 84 пин мăшăр алсиш, Çар техники тума чăваш халăхĕ 67,5 миллион ытла, хÿтĕлев фончĕ валли 48 миллион ытла укçа хывнă, 502 миллион тенкĕлĕх патшалăх займĕ туяннă.

***Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать.***

ПЕРЕВЕДИТЕ ПЕНСИЮ
В ПОЧТА БАНК!



ПОЧТА БАНК

Оформите перевод пенсии в любом из 15000 почтовых отделений или вызвав сотрудника банка на дом

- Снимайте до 10 000 рублей ежемесячно без комиссии в банкомате любого банка страны
- Берите взаймы до пенсии без процентов
- Получайте до 5% на остаток по «Сберегательному счёту»

БАНК, С КОТОРЫМ ВСЁ ХОРОШО

pochtabank.ru

8-800-550-0770

с. Моргауши, ул. Мира, д. 6 (в отделении Почты России)

«Сберегательный счёт» — текущий банковский счёт с ежемесячным начислением процентов на минимальный остаток средств, находившихся на счёте в течение календарного месяца. В рамках тарифа «Пенсионный» (при поступлении пенсионных выплат)/«Зарплатный пенсионер» (при поступлении пенсионных и зарплатных выплат) на сумму от 50 000 руб.: при совершении Квалифицированных операций на сумму менее 10 000 руб. в предыдущем месяце — 3,5% годовых, при совершении Квалифицированных операций на сумму от 10 000 руб. в предыдущем месяце — 5% годовых; на сумму от 1 000,00 до 49 999,99 руб. (включительно) — 3% годовых; на сумму до 999,99 руб. (включительно) — 0% годовых. К счёту выпускается карта. Комиссия за выпуск карты к счёту (перевыпуск по истечении срока): «Мир» неименная — 0 руб.; «Мир» именная: тариф «Пенсионный» — 500 руб.; «Зарплатный пенсионер» — 0 руб. Комиссия за выдачу средств, относящихся к отдельной категории, а также комиссия за выдачу средств, не относящихся к отдельной категории, при сумме выдачи не более 100 000 руб. в календарный месяц: в банкоматах и ПВН АО «Почта Банк» и банков группы ВТБ — не взимается; в банкоматах и ПВН других банков, по тарифу «Пенсионный» и «Зарплатный пенсионер»: в пределах 10 000 руб. в календарный месяц — не взимается, свыше 10 000 руб. — 1% от суммы (мин. 100 руб.). Комиссия за выдачу средств, не относящихся к отдельной категории, при сумме выдачи свыше 100 000 руб. в календарный месяц — 7,9% от суммы (мин. 100 руб.). ПВН — пункты выдачи наличных. Квалифицированная операция — расходная операция по оплате товаров/работ и/или услуг, совершённая клиентом/держателем дополнительной карты по текущему счёту клиента (физического лица), открытому в банке в рамках договора банковского счёта, и отражённая по счёту как списание средств в соответствующем периоде. Кредитный лимит по карте по тарифу «Запасной кошелёк 10 000» — до 10 000 руб. под 0% годовых при выполнении условий беспроцентного периода, в остальных случаях — 10% на задолженность. Обязательный ежемесячный платёж — не менее 500 руб., но не более задолженности. Беспроцентный период (до 36 расчётных периодов) — для кредита на совершение операций оплаты товаров/услуг при условии погашения задолженности до 35 даты платежа. Комиссия за оформление карты — 0 руб., ежемесячная комиссия за обслуживание при отсутствии задолженности — 0 руб., в остальных случаях — 300 руб. Лимит на снятие денежных средств — 10 000 руб/день, 30 000 руб/мес. Комиссия за снятие собственных денежных средств в банкоматах АО «Почта Банк» — 0 руб. Подробности — в тарифах банка на pochtabank.ru. АО «Почта Банк». Лицензия ЦБ РФ № 650. Реклама.